84. 89(=Чув)
20
1-45506



РАИСА САРПИ

# ХĔВЕЛ МУЛКАЧĔСЕМ

Ачасем валли сăвăсем

Национальная библиотека ЧР
4-045506

К84.Ру(=Чув)
С20

РАИСА САРПИ

# ХЁВЕЛ МУЛКАЧЁСЕМ

Сăвăсем. Ачасем валли




Ч-465506

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2013

УДК 821.161.1
ББК 84(2Рос=Рус)6-5
С 20

Сарпи Р.В.
Хӗвел мулкачӗсем. Сӑвӑсем. Ачасем валли. Ӳкерчӗкӗсем О.Н. Любимован. – Шупашкар: «Çӗнӗ Вӑхӑт», 2013. – 48 с., ил.

Проверено 19 СЕН 2017

Ч-45506

Национальная библиотека
Чувашской Республики

© Сарпи Р.В., 2013
© Любимова О.Н. ӳкерчӗксем, 2013

## ВУЛАКАНСЕНЕ СĔННИ



Парнелеп сире сăвă çыххи,
Ман чĕре чечекĕсен пуххи
Пурăнтăр ялан сирĕн килте,
Пурăнăр ялан ман ыр пилте.

Сăрлă кăранташ, тем-тĕрлĕ сăрă
Тытăр та алла хавассăн, йăрă,
Ӳкерчĕксене хевтеллĕн сăрлăр –
Кĕнекене шет илемлĕ тăрлăр!

Тусăмсемĕр , сăввăмсене вулăр,
Савăнса хаваслăн ыррăн кулăр!
Вуламашкăн юлташсене сĕнĕр,
Тĕл пулма мана хĕрӳллĕн чĕнĕр!

Парнелеп сире юратăва –
Парнелеп чунри юрра-сăвва.
Ушкăнпа пĕрле, хавхаланса,
Тӳпере вĕçер саркаланса.



# КĔНЕКЕ УЯВĔ



Кĕнеке эрни хĕвеллĕн
Килсе çитрĕ уявла.
Капăр тумлăн, çут хевтеллĕн
Вăл çĕклет чунри хала.

Кĕнеке – тус пит хастаррăн
Ăс парать пире ялан.
Малалла чĕнет патваррăн,
Тунсăх мар унпа нихçан.

Юмахсем ярать аваллăн,
Хутшăнма унпа – кĕтрет!
Парнелет пире хаваллăн
Туслăх, юрату, тивлет.

Кĕнеке-туса вулатпăр,
Юратса чун-чĕререн.
Варласран хуплаш тăватпăр,
Ĕмĕр пултăр тĕнчере.

# ШĂНКĂРЧ



Шăнкăрч юрă шăрататать,
Керменне вăл юрататать.
Иртенпех юрлать хавассăн,
Тĕнчене мухтать хаваллăн.

Вĕçсе килнĕ кăнтăртан
Çак хаваслă тусăм ман.
Чунăма хаваслатма
Чĕнчĕ юрă шăратма.

Вăл юрлать, эп те юрлап,
Йывăç айĕнче тăрап.
Иккĕн харăссăн юрлатпăр,
Пĕр-пĕрне телей сунатпăр.

# ЭП – ХАВАСЛĂ ПОПУГАЙ

Эп – хаваслă попугай,
Калаçатăп эп пĕрмай.
Юрататăп çу кунне,
Çу çĕклет чĕрчун чунне.
Тириль-тириль-тири-ли!

Эп – хаваслă попугай,
Калаçсам манпа пĕрмай.
Пулăшсам мана ялан,
Савăнса юрлам ян-ян!
Тириль-тириль-тири-ли!

Эп – хаваслă попугай,
Эс манран тарса ан кай!
Эс манпа калаç-юрла!
Чунра пулĕ çут çулла!
Тириль-тириль-тири-ли!





# КАПĂР ТУМ ХАЛЬ ТĂХĂНАТПĂР

Тĕслĕх кăтартсам, куян,
Курăнар паян пуян,
Тăхăн капăр кĕпеме
Уявра халь çӳреме.

Тĕлĕнĕ атте-анне
Курсанах хĕр-куянне:
– Пирĕн килте пур иккен
Пит хитре куян-пике!

Ун валли принц тупмалла,
Лавккана васкамалла!..
Атте куян-принц туянĕ,
Савăнĕ пике-куянĕ.

Тяппипе принц пуçран шăлĕ –
Тăхăнтарĕ пуç кăшăлĕ:
- Эс – çураçнă хĕрĕм, – тейĕ,
Хĕр-куянăм хĕпĕртейĕ.

Куян туйĕ чаплă кĕрлĕ,
Пит нумай куян-тус вĕрлĕ –
Пăхĕç ман куян çине.
Сăнĕç мана – хуçине.

# САЙККАПА СУЙККА

Йăкăлт-якăлт! Йăкăлт-якăлт!
Сикрĕ, сикрĕ, сикрĕ Сайкка.
Йĕчĕ, йĕчĕ, йĕчĕ Суйкка:
– Ай! Сикет кĕпер çине,
Тарĕ кĕç вăрман хыçне!..

Йăкăлт- якăлт! Йăкăлт-якăлт!
– Эпĕ сан теттӳ-çке, Суйкка, –
Тет ăна мулкачĕ Сайкка, –
Сикмĕп эп кĕпер çине,
Тармăп эп вăрман хыçне.

Йăкăлт-якăлт! Йăкăлт-якăлт!
Сикрĕ, сикрĕ, сикрĕ Сайкка –
Ыр сăмах итлет, ав, Суйкка:
– Пулăп эп ялан санпа,
Эп санпа – хавас сăнпа!

Йăкăлт-якăлт! Йăкăлт-якăлт!
Санпала пĕрле сикетпĕр,
Юханшыв патне çитетпĕр,
Сикĕпĕр кĕпер çине,
Тарăпăр вăрман хыçне!

Йăкăлт-якăлт! Йăкăлт-якăлт!
Сикрĕ Сайкка, сикрĕ Суйкка,
Сикрĕç, сикрĕç, сикрĕç çуйкăн!
Сикĕç, ак, кĕпер çине,
Тарĕç сĕм вăрман хыçне.

Йăкăлт- якăлт! Йăкăлт- якăлт!
Çитрĕç, ак, кĕпер патне,
Çитрĕç, ак, вăрман патне…

Сикĕç кĕç кĕпер хыçне,
Сикĕç, ак, вăрман хыçне...

Йăкăлт-якăлт! Йăкăлт-якăлт!
Малалла... Аннесĕр шиклĕ...
Сĕм вăрман - кашкăр хушиклĕ...
Суйкка Сайккана каларĕ:
– Каялла сиккелер мар-и?..

Йăкăлт-якăлт! Йăкăлт-якăлт!
Сиккелер анне патне.
Харсăр, вăйлă çын анне.



Калăпăр ăна çапла:
– Пит хаваслă санпала!

Йăкăлт- якăлт! Йăкăлт- якăлт!
Сиккелерĕмĕр хĕмпе!
Кăшт çӳре- ха пирĕнпе!
Сиккелер кĕпер патне,
Сиккелер вăрман патне!

Йăкăлт- якăлт! Йăкăлт- якăлт!
Сайккана йăл кулчĕ амăш,
Суйккана куç хĕсрĕ амăш,
Сикрĕ вăшт! кĕпер патне!
Сикрĕ вăшт! вăрман патне!

Йăкăлт- якăлт! Йăкăлт- якăлт!
Сикрĕ, сикрĕ, сикрĕ Суйкка,
Сикрĕ, сикрĕ, сикрĕ Сайкка,
Сикрĕç харсăррăн вĕсем:
Амăшпе сикрĕç вĕсем,
Сикрĕç вăшт! кĕпер патне:
Сикрĕç вăшт! вăрман хыçне!

Йăкăлт- якăлт! Йăкăлт- якăлт!



# МЕЧĔК



Тăппи-таппи-тап-тап!
Хытăрах мана эс çап!
Çавăрса çĕре пăрах!–
Пулăп эп хаваслăрах.

Тăппи-таппи-тап-тап!
Меллĕрех мана эс çап!
Хĕнесен те эс мана,
Кӳренместĕп эп сана.

Тăппи-таппи-тап-тап!
Эп сикмешкĕн юратап.
Эх, çитесчĕ пĕлĕте!
Пурнăçласчĕ ĕмĕте!..
Тăппи-таппи-тап-тап!
Тыт мана!
Атту тарап!..

# ЛАША

Лапара, çул айккинче
Симĕс курăклăх çинче
Ман лашам мана кĕтет,
Чăтăмсăррăн кĕçенет.

Сиксе ларăп ун çине,
Ярса тытăп çилхине:
– Хăвăртрах, лашам, вĕçтер!
Кукамай патне çитер!

Кукамайăм ман – Çинкка
Ман валли мăн карçинкка
Хатĕрленĕ пан улми –
Çийĕп ярăп ним юлми.

Кулачсем – кăмакинче.
Пӳремеч – сĕтел çинче.
Пулнă кукăлĕ ăнса –
Хăналанăп савăнса,

Лашана та эп хăналăп,
– Малалла! – тесе çеç калăп:
Килĕп вĕçтерсе калла,
Кучченеç тытса алла.

Эп хăналăп туссене,
Кукăльсем сĕне-сĕне.
Пит аван – лаша ман пур,
Вĕçтерсе çӳрет маттур!

# ЭПĔ



Мăн лапа пур манăн хамăн,
Мăн лаша та пур хăрхамăн.
Утланатăп кашни кун,
Ӳркенсе тăмасть ман чун.

Эп пит харсăр юланутçă,
Лашана саватăп шутсăр!
Вĕçтерсе çӳретĕп эпĕ
Лапара халь тĕпĕр - тепĕр.

Ĕненсемĕр, эп хастар!
Эпĕ пĕртте хытă мар.
Ярăнтарăп пит аван –
Шăккалат мана парсан.

# ЭП ВĔРЕНТĔП КУШАКА

Чăтма çук мана саваççĕ,
Пит-куçа, алла çăваççĕ.
Вĕрентеççĕ ир çинче:
– Çи сĕтелĕн хушшинче!

Кушака кӳрентереççĕ,
Ура айĕн çитереççĕ.
Тап-таса урай, шап-шар,
Пурпĕрех вăл сĕтел мар.

Эп вĕрентĕп кушака
Шеп тытмашкăн кашăка.
Çĕн йĕрке килте эп тăвăп –
Кушак тяпписене çăвăп.

Чинлăн лартăп ирхине
Çĕн сĕтелĕн хушшине
Çемьемпе апатланма –
Культурăллăн сăнланма!

Пурте пăхĕç кантăкран –
Тĕлĕнĕç ман кушакран.
Тĕслĕх илĕç кĕç унран.
Савăнĕ кушак чунран.

Пур кушаксене халь ĕнтĕ
Чыслăн эп çиме вĕрентĕп.
Пурте итлĕç хушнине,
Сăнĕç эсĕр çинине!



Ч-45506
Национальная библиотека
Чувашской Республики


Мяу-мяу

# КИРЛĔ ĔҪ

Сĕрĕп пудра сăмсине,
Турăп çăмлă хӳрине –
Пуçлăх евĕр ман кушакăм,
Пысăк ĕçлĕх пуçлĕ, акă.

Телевизора кĕç ларăп –
Кушака сăмах эп парăп.
Çĕн программа «Кушак çурчĕ»
Тĕнчипех ачасем курччăр.

Çĕн хушу кăларăп йăпăрт –
Ашшĕ- амăш итлĕç шăпăрт:
Пухăнса пурте пĕрле
Юрлĕç «мяу – мям!» çĕрле.

Кушакпа – хам тусăмпа
Çĕнĕ, вирлĕ пусăмпа
Тăвăпăр эпир сĕнӳ –
Пĕтĕм тĕнчене Чĕнӳ:

– Пур кушак çурисене
Йышăнăр çемьесене.
Килсĕр-çуртсăрри ан пултăр –
Телейпе кашни чун тултăр.

# ЖИРАФ

Жираф утса ҫӳрет мӑнаҫлӑ,
Чӑмлать вӑл ҫулҫӑ ирлӗ-каҫлӑ.
Вӑл халь чи модӑллӑ чӗрчун –
Вегетарианец! Ырӑ чун!

Вӑл тӑнӑҫ кӑмӑллӑ, хаваллӑ,
Хӑватлӑ та ачаш, хаваслӑ –
Тытса ҫурмасть никам хӑмне
Тӑрантарасшӑн хырӑмне.

Илемлӗ, вӑрӑм мӑйлӑскер,
Хеветлӗ, ҫутӑ ӑслӑскер
Лаша, ӗне, слон евӗрех
Вӑл халӑхшӑн ӗҫлесшӗнех...

Унпа тӑвасчӗ килӗшӳ –
Пулатчӗ ырӑ илӗшӳ.
Унпа хитрен калаҫмалла,
Вара иленӗ вӑл алла.

Ӑна ӑс памалла кӑштах,
Ӗҫе вӑл пуҫӑнӗ вӑштах.
Эп жирафа вӗрентӗп хам –
Унпа пӗрле ӗҫе тухам!

Жираф - чӑн пулӑшуҫӑ пулӗ –
Ҫынсем патне выртать ун ҫулӗ.
Пуҫтарӗ ҫимӗҫ – ананас –
Хӑналӗ манпала сана.



# ВӐРӐМ МӐЙЛӐ ЖИРАФ

Утать кĕллин-келлĕн
Ярапа шлепкеллĕ
Питĕ вăрăм мăйлă жираф.
Ачасем чупаççĕ –
Тĕлĕнсе супаççĕ.
Йытăсем вĕреççĕ: Хав-хав-хав!

Жи-жи-жи-жи-жи-
Жи-раф...
Питĕ вăрăм мăйлă жираф.
Халăх пăхкалать кăн-кан:
– Ăçта танккан?
Хĕвĕшет çын ун тавра.
Кăшкăрашрĕ пĕр павра:
– Кай-кай-кай! Вăт тăрнаккай!

Африкăран килнĕ
Артист ятне илнĕ –
Çулпала пырать жираф.
Гастроле вăл тухнă,
Тус-юлташсем пухнă,
Тум-юмлавĕ унăн – пысăк лав!

Жи-жи-жи-жи-жи
Жи-раф...
Питĕ вăрăм мăйлă жираф.
Вăл утать юрласа,
Хăйне хăй ырласа:
– Хĕвеле чуп тăвап питĕнчен!
Çăлтăрсем пуçтарап тĕм çинчен.



Юрататăп эп пурнăça,
Шав шанатăп шеп ăнăça.
Шăрăх çĕртен килтĕм,
Халăх пилне илтĕм,
Сирĕн çĕрсем тăрăх
Халь утатăп йăрă.
Чаплă артист эпĕ!
Паллă артист эпĕ!

Халăх тăрать хапхасем патĕнче,
Çăварне карса тĕлĕнет:
– Ах, тĕнче!
Мĕн катемпийĕ ку?! Ай, тур-тур!!
Ачасем хуравлаççĕ маттур:
Жи-жи-жи-жи-жи
Жи-рав
Гастроле килнĕ!
Пулать курав!



# КĂВАКАЛ ЧĔППИСЕН ЮРРИ



Нарт-нарт-нарт, нарт-нарт-нарт!
Шурăмпуç шуралчĕ, нарт!
Ĕнтĕ вăхăт выляма,
Васкар халĕ урама.

Нарт-нарт-нарт, нарт-нарт-нарт!
Хаваспа утатпăр, нарт!
Килтĕмĕр пĕве хĕрне,
Шыв сапатпăр пĕр-пĕрне!

Нарт-нарт-нарт, нарт-нарт-нарт!
Ишнĕ май чăматпăр, нарт!
Выльăпăр пытанмалла,
Хĕререн вăшт тытмалла.

Нарт-нарт-нарт, нарт-нарт-нарт!
Каçхи шуçăм çитрĕ, нарт!
Килелле халь каймалла,
Килĕпĕр ыран, калла!

# САР ЧЕЧЕК



Эпĕ – сап-сарă чечек,
Улăхра ӳсеп чечен.
Кăпăшка ман çеçкемсем –
Сап-сарă шевле-хĕмсем.

Эпĕ – сап-сарă чечек,
Пит ачаш, хитре, черчен.
Киленетĕп хампа хам.
Илеме сана парам.

Эпĕ – сап-сарă чечек.
Тап-таса çут сывлăм пек.
Çынсене сĕнеп хаваслăх,
Парашютлă ман пуласлăх.

Эпĕ – сап-сарă чечек,
Хĕвел пек çиçетĕп тек.
Чир-чĕртен те эп сиплетĕп,
Сан патна вĕçсе çитетĕп!

# ЧИЕСЕМ, ЧИЕСЕМ

Чиесем, чиесем
Лартрăмăр эпир.
Сад пулса, сад пулса
Тăчĕ пушă хир.

Чиесем, чиесем
Пиçрĕç хĕп-хĕрлех.
Килĕрех, тусăмсем,
Пухăпăр пĕрлех!

Чиесем, чиесем
Тутлă çав тери!
Тусăмсем, чиесем
Пĕрле çиер-и?



# АСАМЛĂ КЕРМЕН

Тăрать кермен асамлăн
Мăн Атăл хĕрринче.
Асамçисем – хаваслăн
Çӳретпĕр çĕр çинче.

Шевле кермен – «Росинка»,
Юмах – халап та мар.
Вăл лагерь – çут «Росинка» –
Эпир – хĕвеллĕ çар!

Пире парать хаваллă
Ыр сывлăш сĕм вăрман.
Кунта кашни кун паллă!
Кунта – кĕтретлĕ стан.

Йĕместпĕр, хурланмастпăр –
Ташлатпăр юрласа.
Канатпăр-савăнатпăр –
Чуна саламласа.

Вылятпăр та кулатпăр,
Ишетпĕр Атăлта.
Çĕн вăй-халпа тулатпăр –
Çăтмахри пек кунта.



# ХЁВЕЛ МУЛКАЧЁСЕМ

Йăлт-йăлт сикелеççĕ пахчара – курап!
Юрă парнелетĕп эпĕ вĕсене.
Чиесем пухатăп – банкăна хурап,
Тав туса шевлеллĕ сар мулкачсене.

Сар хĕвел мулкачĕсен ăшă тяпписем –
Мăя кăтăкласçĕ – эп кулатăп шеп.
Сар хĕвел мулкачĕсен çутă сапписем –
Пахчара пĕччен те хăрамастăп эп.



# ПАТТĂР СЫСНА АМИ



Хӳри пăкăр,
Сăмси мăкăр –
Сысна ами - амăш
Султан пек харкамăш
Саркаланса выртнă,
Шăлне кишĕр çыртнă.

Хӳри пăкăр,
Сăмси мăкăр –
Çурисем выртаççĕ,
Харăссăр туртаççĕ
Чĕччине пит вирлĕ.
Сĕт вĕсене кирлĕ.

Хӳри пăкăр,
Сăмси мăкăр-
Орден ӳкеретĕп –
Чап ăна кӳретĕп.
Паттăр сысна амăш
Мухтава юрамăш!

# СЛОН



Сăрт-ту евĕр слон капмар,
Ăслă, ырă та патвар.
Пурăнать шăрăх енче,
Инçетри çĕршывсенче.
Кăтартсан экран çинче –
Куç илместĕп ун çинчен.
Мĕн тери хитре чĕрчун!
Уншăн тунсăхлать ман чун!

Туслашас килет слонпа,
Ярăнас килет унпа!
Слон çинче пырсан шкула –
Тĕлĕнĕ мĕнпур хула!..
Вăт вĕт пулĕччĕ шăв-шав!..
Вăт вĕт пулĕччĕ мухтав!..
Слон ăçтан тупас-ши ман?
Тĕлĕкре курнать ялан...

# ПАРПУС

Йыт çури, ак, парнелерĕç:
– Сан валли пулать тус, – терĕç.
Ай-тур-тур! Епле вăл пĕчĕк –
Ал лаппи çинчи çăм мечĕк...
Хуп-хура каç евĕрех.
Сăмси пĕчĕк пăнчă пек.

Эп ăна пăхатăп ирсерен,
Сĕт ярса паратăп каçсерен.
Кунĕпе вылятăп унпала,
Питĕ туслă йыт çурисĕм манпала.

Йыт çури кăшт ÿсрĕ ĕнтĕ.
Хăратмасть çĕрлехи ĕнтрĕк –
Юнашар Парпус çыврать.
Чăмăр пек сăмси çавра.

Йыттăм ÿсĕ пысăк пÿллĕ,
Пичкерен те пулĕ çÿллĕ.
Кайăп вăрмана унпа,
Тупăп упана унта!







# ВĔРШĔН

Вĕçет çил евĕр кашни кун
Шыв çийĕн çивĕч вĕршĕн.
Мĕлки васкать хăй хыççăн ун...
Тивлет вăл пирĕн çĕршĕн!

Вĕçет вĕршĕн пит вирлĕн
Самолет пек каç-ирлĕн
Яп-янкăр тӳпере.
Çӳлтен сăнать çĕре.

Ăна чунтан саватăп,
Пăхса эп савăнатăп.
Çыр хĕрринчи хушăксенче
Ăна сыхлап кушаксенчен.

Çак вирлĕ кайăк, вĕçнĕ май
Тытать шăна - кăпшанкă.
Анчах хастарскере пĕрмай
Сыхлать кушак-йăпшанкă!

Вĕçесчĕ манăн вĕршĕнле!
Пуласчĕ вĕл çунатлă.
Çĕкленĕп эп тӳпенелле –
Вĕçевçĕ – летчик пулăп!

# ВАЛЮШПА КАЛУШ

Валюша паян кукашшĕ
Илсе пачĕ çут калуш.
Урама Валюш тухасшăн:
Куртăрччĕ ăна Алюш!..

Тăхăнчĕ вăл йăпăр-япăр
Йăлтăр-йăлтăр калуша!..
Куççуль тухрĕ шăпăр-шапăр!!!
Мĕн-ши пулчĕ Валюша?!.

Хаш та хаш сывлать вăл ассăн...
Хурлăхпа чĕри тулать...
...Сар хĕвел тулта хавассăн
Йăл-йăл-йăл çиçсе кулать.

Çĕр тип-типĕ. Пылчăк çукка.
Туфлипе юлташ çўрет.
– Çумăр, килсе çу-ха туххăм!–
Теейсе Валюш йĕрет...





# КĔВĔЛЛĔ ÇЕМЬЕ

Эп, атте, анне каç-ир
Юр юрлатпăр шеп эпир
Хир, вăрман, çаран çинчен,
Тинĕспе тӳпе çинчен.

Çирĕп туслă ман çемьем,
Юрлăр пирĕнпе, туссем!

Эп, атте, анне каç-ир
Шăрататпăр çеç эпир
Асатте – кукаç çинчен,
Асанне – кукам çинчен.

Çирĕп туслă ман çемьем,
Юрлăр пирĕнпе, туссем!

Эп, атте, анне каç-ир
Юрлăпăр ялан эпир
Туслăх, тăнăçлăх çинчен,
Пире илттĕр пур тĕнче!

Çирĕп туслă ман çемьем,
Юрлăр пирĕнпе, туссем!

# ЛИЛА

Ҫӗн ҫул ячӗпе! Хаваслă
Саламсем йĕри-тавра.
Иртенпех паян ҫĕр саслă
Кил тăрать хавас шавра!

Таврара халь тăпăр-тăпăр:
Ҫӗнӗ Ҫул! Парне – зала!
Асатте кĕрет пит йăпăрт –
Тытнă теттесем алла.

Теттесем пӳртре мĕн чухлĕ!
Виҫĕ слон, упа, жираф!
Ҫĕр шăши, шапа, – кам шутлĕ!
Капăр тум – тăп-тулли шкаф!

Виҫ Мальвина, вунă Барби,
Пукане ҫеҫ – мăнă лав!
Шăккалат, шерпет – ҫурт бар пек...
Парнесем – чăн-чăн курав!

Алăка такам шаккарĕ –
Шăнкăртатрĕ! шăнкăрав.
Алăка уҫмаваскарĕ
Йăл кулса амăшĕ, ав.

Лилăна мĕскер-ха пулчĕ?
Чупрĕ амăш хыҫĕнчен.
Ашшĕпе паян тĕл пулчĕ –
Курнăҫманччĕ темĕнччен.

Савнă ашшĕ ун пĕр харăс
Илсе килнĕ парнесем.



Хĕл мучи, Юр-хĕр, çĕн парăс –
Çитнĕ Çурçĕртен вĕсем.

Лила уçкалать васкавлăн...
Тĕрлĕ-тĕрлĕ курупка!
Тем шырать васкав хускавлăн,
Ашшĕ-амăшĕ шăп-ха.

Лила кăмăлсăр-çке питĕ –
Кăн! пăхса пурне куçлать.
Хĕп-хĕрлех ун сăнĕ-пичĕ –
Çĕнĕрен шырав пуçлать.

Тупрĕ вăл ĕне те вăкăр,
Пукане, мулкач... Епле?..
– Йăмăк çук-çке! –
Мăкăр-мăкăр
Кӳренсе сăмах тĕплет:

– Пĕтĕмпех кăларса перĕр
Парнĕре мăн çырмана...
Йăмăк парнелетпĕр, – терĕр, –
Çĕн çулта эсир мана...

Айăплăн пуç усрĕ амăш...
Ашшĕ пăхрĕ куçĕнчен:
– Чăн, курса тăрать турамăш,
Шухăшлап йăмăк çинчен...

Лила макăрма пăрахрĕ:
– Эппин, кайăр лавккана...
Амăш куллине янратрĕ:
– Эрех пулмĕ пĕр кана...

Сăмах панă, туянатпăр!
Кăшт анчах укçа пухатпăр!

# АСАМЛĂ КЕРМЕН ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮМАХ

Ырлăх-сывлăх, çамрăк тус!
Килӳнте пĕччен ан юс!
Кил, юмах ярса парам!
Сывлăха çул кăтартам!
Эп пĕлетĕп – çутă ĕмĕт
Çутатать чунна вут-хĕмĕн.
Вĕл сарса асамлăха
Ирттереп асаплăха.
Пур çынна эп юрататăп,
Юрату çырли тататăп
Эп асамлăх сатĕнче,
Эп ялан çын патĕнче.
Эп пуриншĕн те яваплă,
Çавăнпа мухтавлă, чаплă.
Вăй парап пур тĕнчене,
Халь пăхатăп сан çине.
Ачаран юмах вулатăн,
Рыцарь тĕлĕкре пулатăн.
Ăсталатăн вут та хĕç,
Эс шыратăн паттăр ĕç.
Эсĕ хăвăртрах ӳсесшĕн,
Паттăр çĕнтерӳ тӳсесшĕн.
Ĕмĕтре шыран термен,
Тĕл пуласшăн эс кермен.
Санăн шухăшна пĕлетĕп,
Ыр хыпар халь пĕлтеретĕп.
Чăн та паттăр эс – ман тус!
Шанчăкпа çĕр çине пус!
Пăхкала йĕри -тавра.
Шăрат юрă пĕр çавра.



Ăш-чикне тимле, сăна,
Чухлăн хăв ăна-кăна...
Чунтанах эп саламлатăп –
Хăвăн керменне явлатăп:
Чăн çапла! Сан керменккӳ –
Санăн пиçĕ кĕлеткӳ!
Эс ан тăр усса пуçа –
Хăв эс пĕртен-пĕр хуçа
Хăвăн шеп керменккӳнте!
Хăвăн шиклĕхне çĕнтер!
Керменккӳне хăв эс тунă,
Чи мухтавлă мул эс хунă
Хăвăн çут керменккӳне –
Хăвăн пиçĕхнĕ пӳне.
Эсĕ чаплă вăй-хăватлă,
Эсĕ сумлă та сăваплă.
Эсĕ хăв маттур сыхлавçă!
Хăвăн пурлăхна куçлавçă!
Саламлатăп тăвăça!
Ĕненсем эс сăвăça!
Пăхкалар керменккӳне –
Ăш-чикне, хитре пӳне.
Лайăхрах унпа паллаш –
Пултăр сан хивре малаш.
Керменккӳ сан пурăнать –
Пурнăçу аван ăнать,
Ма тесен, сан хырăм пур –
Апата вĕтет маттур.
Çав апат парать вăй-хал,
Хыт ĕçлет ура та ал.
Пӳлĕмсем кунта нумай –
Халь кĕрсе пăхар çул май.
Пӳлĕмсем – ӳт клеткисем.
Пурте витĕхлĕ вĕсем.
Хыт ĕрчеççĕ самантрах –
Кăшкăрас çук эсĕ: «Ах!»

Хăраса та аташса,
Пурнăн çывăх туслашса
Хăвăн шеп керменккӳпе
Çытăхлă кĕлеткӳпе.
Пурнăçланĕ ĕмĕтӳ,
Пулмĕ пурнăçра çĕтӳ.
Эс пăхмашкăн – пăхаттир,
Юратать сана уй-хир!
Шутлама та эс пĕлетĕн,
Ăслă шухăшлав илетĕн.
Ыррисем йăхра нумай –
Çуталать этем самай.
Çутçанталăка юрат,
Ырă шухăшсем çурат.
Çуркунне килсе çитсен,
Урама тух ирсерен.
Мечĕк тыт та эс алла –
Чупкала çеç футболла.
Чир-чĕр ан лектĕр тесен,
Ĕçмелле эмель - селен.
Çутçанталăк - мăн анне
Сывлăхна сиплет санне.
Çирĕплетĕпĕр хаваллăн
Çĕкленӳллĕн те мухтавлăн
Хамăрăн керменккене -
Хамăрăн кĕлеткене.
Ĕçĕпĕр эпир хавассăн,
Сывламасăр ассăн-ассăн,
Селена – шеп эмеле,
Тупăпăр мая-меле.
Чир-чĕр тарĕ аякка!
Пурнăпăр хитре, яка!
Керменкке - ӳт-пӳ çĕр çул
Сарĕ çутă хум темчул!

## Тупмалли

*Вулакансене сĕнни* ........................................ 3

КĔНЕКЕ УЯВĔ ........................................................ 5
ШĂНКĂРЧ ................................................................ 6
ЭП – ХАВАСЛĂ ПОПУГАЙ ........................................ 7
КАПĂР ТУМ ХАЛЬ ТĂХĂНАТПĂР ........................ 9
САЙККАПА СУЙККА ............................................ 10
МЕЧĔК .................................................................. 13
ЛАША .................................................................... 14
ЭПĔ ........................................................................ 15
ЭП ВĔРЕНТĔП КУШАКА ........................................ 16
КИРЛĔ ĔÇ .............................................................. 19
ЖИРАФ .................................................................. 20
ВĂРĂМ МĂЙЛĂ ЖИРАФ ........................................ 22
КĂВАКАЛ ЧĔППИСЕН ЮРРИ ................................ 25
САР ЧЕЧЕК ............................................................ 26
ЧИЕСЕМ, ЧИЕСЕМ .................................................. 27
АСАМЛĂ КЕРМЕН .................................................. 28
ХĔВЕЛ МУЛКАЧĔСЕМ ............................................ 30
ПАТТĂР СЫСНА АМИ ............................................ 31
СЛОН .................................................................... 32
ПАРПУС ................................................................ 33
ВĔРШĔН ................................................................ 35
ВАНЮШПА КАЛУШ .............................................. 36
МУЗЫКĂЛЛĂ ÇЕМЬЕ ............................................ 39
ЛИЛА .................................................................... 40
АСАМЛĂ КЕРМЕН ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮМАХ .... 43



Литературно-художественное издание
для детей младшего школьного возраста

**Раиса Сарби**
**(Сарби Раиса Васильевна)**

# СОЛНЕЧНЫЕ ЗАЙЧИКИ

Сборник детских стихотворений

Художник *О.Н.Любимова*
Редактор *И.Г.Бородкина*
Художественный и технический редактор *И.Г.Бородкина*
Корректор *И.Г.Бородкина*
Компьютерная верстка *Т.В.Алексеевой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

Подписано в печать 30.04.2013. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Гарнитура Arial_23XP. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 3. Тираж 1000 экз. Заказ № К-152.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46. E-mail: newtime1@mail.ru.

25.00



**Раиса Сарпи**, поэт, Чăваш çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ, Пĕтĕм тĕнчери тĕрĕк халăхĕсен поэзийĕн Нежип Фазыл ячĕллĕ, Пĕтĕм тĕнчери чăвашсен литературин Алексей Талвир ячĕллĕ премисен лауреачĕ, Пĕтĕм тĕнчери халăхсен хушшинчи энергоинформаци наукисен Академийĕн эниологи профессорĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш тата Раççей писателĕсен союзĕн членĕ, Пĕтĕм тĕнчери халăхсен хушшинчи писательсен союзĕсен пĕрпĕтĕмлĕхĕн хисеплĕ членĕ.
Килти телефон: (8 835) 41-87-48.
Кĕсье телефонĕ: 8-927-863-80-69.

**Ольга Любимова**, ӳнерçĕ. Тĕрĕк тĕнчин ӳнерçисен халăхсен хушшинчи 9-мĕш ĕç лабораторийĕн хутшăнçи (2006, Турци). ЮНЕСКО çумĕнчи Пĕтĕм тĕнчери художниксен Федерацийĕн тата Раççейри художниксен ĕçлĕхлĕ пĕрлĕхĕн членĕ (2007). Вăтăра яхăн кĕнеке илемлетнĕ. Хăйĕн сăввисене икĕ кĕнеке илемлетсе кăларнă. Халăхсен хушшинчи, Республикăри, регионсем хушшинчи конкурс-фестивальсен дипломанчĕ. Хăйĕн уйрăм выставка-куравĕсене нумай хутчен йĕркеленĕ, коллективлă куравсене час-часах хутшăнать.
Килти телефон: (8 835) 66-45-53.
Кĕсье телефонĕсем: 8-927-844-36-69, 8-927-012-64-64.

